# Районăн харсăр çыннисем



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

## Юратнă ĕç – чун канăçĕ

**«Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕпе «Пуçламăш медицинăпа санитари пулăшăвне кÿрекен тытăма аталантарасси» регион проектне пурнăçа кĕртмешкĕн 2019–2024 çулсенче 37,8 млн. тенкĕ уйăрма палăртнă. Иртнĕ çул регион проектне тĕпе хурса республика бюджечĕн укçи-тенкипе 26 ФАП тунă. Пирĕн районта пĕлтĕр Ураскассипе Киччĕ ялĕсенче хăпартнă. 2013 çултанпа Тăвай енре 10 фельдшерпа акушер пункчĕ хута янă. Çывăх вăхăтра тата Çĕнçырмара тума палăртнă.**

Ялсенче те медицинăн пахалăхлă пулăшăвне тивĕçме, чире малтанхи тапхăрта уçăмлатма, тĕрĕс диагноз лартса сиплев мелне палăртмашкăн условисем туса пама, профилактика мероприятийĕсене вăхăтра туса ирттересси çине пысăк тимлĕх уйăрние палăртнăччĕ Мучарти фельдшерпа акушер пункчĕн заведующийĕ Галина Витальевна Баданова. Унпа тĕнчипе коронавирус чирĕ сарăлма пуçличчен тĕл пулнăччĕ. Халĕ вара сиплев ĕçĕпе пĕрлех ялти медицина ĕçченĕн хăрушă инфекцирен хÿтĕленессипе пурин те тимлĕ пулмаллине, килтен ниçта та тухмалла маррине ăнлантармалла. Çак ĕç çине питĕ яваплăхпа пăхать вăл. Куллен шăнкăравласа калаçать тинтерех Мускавран тата Самар хулинчен ĕçлесе е канма килнĕ çынсемпе. Вĕсем вара сахалăнах мар – ялта 15-ĕн. Кашнин çинчен пĕлсе тăрать фельдшерица. Пурне те карантин йĕркипе – 14 кун килтен ниçта тухмасăр лармаллипе тĕплĕн паллаштарнă. Хăшĕсем каннă хыççăн тепĕр икĕ эрнерен вахтăна тăма çула тухмаллине те пĕлтерсе хунă. Вĕсем çыхăнсах тăраççĕ ФАП заведующийĕпе. Ÿт температури ÿсмен-и е ытти чир паллисем çук-и – пĕтĕмпех ыйтса тĕпчет сывлăх ĕçченĕ.



♦ Г.В.Баданова ĕç вăхăтĕнче

Иртнĕ çул ял тăрăхĕнчи Киччĕ ялĕнче фельдшерпа акушер пункчĕ уçăлнă. Мучарти ФАПа 2012 çулта тĕпрен юсанă. Унран маларах газ кĕртнĕ пулнă. Ăшă тата сивĕ шыв шалах кĕрет. «Ĕç условийĕсем маларахри çулхисенчен чылай лайăхланнă. Пациентсене, çав шутра ача-пăчана йышăнмалли, процедура тумалли, хĕрарăмсене пăхмалли уйрăм пÿлĕмсем пур. Кунта килсен виçĕнме юратаççĕ шăпăрлансем, амăшĕсем прививка срокĕсемпе интересленеççĕ. Фельдшер пунктне компьютерпа тивĕçтерме шантараççĕ-ха. Тем пекехчĕ»,- тет Галина Витальевна.

Фельдшерпа акушер пунктне укол, прививкăсем тутарма та, эмелсем илме те, чуна уçса калаçма та килеççĕ. Галина Витальевна сывлăха тĕрĕслеттерме диспансеризаци витĕр тухмаллине тĕплĕн ăнлантарать. Халĕ, çĕршывра коронавирус сарăласран хÿтĕленнĕ лару-тăрура, тĕрĕслеве вăхăтлăха чарма тивнĕ. Çакăн çинчен те пĕлтерсе хунă халăха. Галина Витальевнаран ытларах иртнĕ çулхи ĕç-хĕл çинчен ыйтса пĕлтĕм.

2019 çулта Г.Багданова хăй пăхса тăракан участокран пурне те тенĕ пекех (100 çынран 97-не) диспансеризаци тĕрĕслевне явăçтарнă. 2020 çулта планпа палăртнă 80 çынран 20-шĕ сывлăхне тĕрĕслеттерме ĕлкĕрнĕ. Усал шыçă, сахăр диабечĕ, чĕре чирĕсене анлă тĕрĕслевĕн пĕрремĕш тапхăрĕнче тупса палăртни сиплеве вăхăтра пуçăнма май панă. Çапла «Сывлăх» наци проекчĕн ырă витĕмне Тăвайри тĕп больницăра ялсене тухса çÿрекен кустăрмаллă ФАПăн пулăшăвĕ те аван çирĕплетсе парать. Унпа темиçе хутчен те усă курнă.

Иртнĕ çул Раççей Федерацийĕнче «#ДоброВСело» проекта пурнăçласа республикăри сиплев ĕçĕн тĕрлĕ специалисчĕсем яллă вырăнсенче ФАПсен ĕç-хĕлне лайăхлатас, медицина пулăшăвĕн пахалăхне ÿстерес тĕллевпе аякри районсене çула тухнă. Мучар ялĕнче те пулнă куçса çÿрекен автобус. Республикăри специалистсем пĕрле районти сиплев ĕçченĕсем те тĕрлĕ енлĕ пулăшу пама хутшăннă ял çыннисене. Çапла пĕр кунта ялти ФАПра 45 ытла çынна йышăнма ĕлкĕрнĕ. Куç тухтăрĕ, кардиолог, стоматолог тата ытти тухтăрсем пациентсен сывлăхне тĕрĕсленĕ. Сахăр шайне, юн пусăмне виçнĕ, консультацисем панă. Республикăри медицина учрежденийĕсене çитсе килме сĕннĕ хăшĕсене. Шкул çумĕнчи кану лагерĕнчи ачасемпе шăл врачĕсем мастер-классем ирттернĕ. Районти тĕп больницăри Роза Стифоновапа Алексей Петров врачсем пурнăç хăрушсăрлăхĕн правилисене çирĕп пăхăнмалли, тĕрĕс апатланмалли çинчен чарăнса тăнă. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчи студент-волонтерсем вĕренекенсене пирвайхи медицина пулăшăвĕ пама хăнăхтарнă, ФАП йĕри-тавра картана сăрласа хăварнă.

Пĕлтĕр çулталăк вĕçнелле районти куçса çÿрекен ФАП Мучар ялне тепре çитнĕ. Ку хутĕнче çак участока тивĕçтерекен Елена Кузьмина врачпа Галина Степанова медсестра йышăннă пациентсене. Кăçалхи çул пуçламăшĕнче çак медработниксемех сиплев çуртĕнче пулма ĕлкĕрнĕ, 22 çынна пăхнă пĕр кунта. Специалистсем пĕтĕмĕшле юн анализĕсем илнĕ, сахăр шайне виçĕ, ЭКГ тунă. Ялта пурăнакансем вырăнтах тĕрлĕ енлĕ медицина пулăшăвĕ илнипе питех те кăмăллă пулнине палăртаççĕ. Çынсене флюорографи тĕрĕслевне, акă, больница машинипе иртнĕ çул виçĕ хутчен илсе кайса килнĕ.

Г.Баданован професси ăсталăхĕпе ĕçе йĕркелеме пĕлнине палăртаççĕ район больницин ертÿçисем.

Фельдшерица пăхса тăракан участокра 523 çын. Тухса çÿрейменнисем патне эрнере темиçе хутчен килĕсене кайса килет вăл: врач хушăвĕпе укол тума та, эмел таврашне çитерсе пама та... Лицензи пуртан, фельдшерпа акушер пунктĕнчех медикаментсемпе тивĕçтерме пултарать. Çакă та ял халăхĕшĕн меллĕ.

«Çулĕпе чи асли Анна Ивановна Муханова, 95 çулта,– терĕ вăл.– Ăстăнĕпе çирĕп-ха, куçĕ кăна курмасть салтак арăмĕн».

«Демографи» наци проекчĕн «Аслă ăру» проекчĕпе килĕшÿллĕн Тăвайри халăха социаллă пулăшу паракан центрăн микроавтобус çăмăллăхне те туйса илнĕ Мучарсем. Ялти 65 çултан аслăрах çынсем çак меллĕ транспорт хатĕрĕпе сывлăхне тĕрĕслеттерме больницăна кайса килнине пĕлтерчĕ ялти фельдшерица.

Канупа уяв кунĕ-и е ĕç вăхăчĕ вĕçленнĕ – кирек хăш вăхăтра та пулăшу кирлĕ çын патне васкать шурă халатлă хĕрарăм. Йывăртараххисене пĕр тăхтаса тăмасăрах больницăна ăсатать. Миçе çынна вилĕмрен çăлман çапла, камран кăна ăшă тав сăмахĕсем илтмен? Ялта пурте хисеплеççĕ ăна. Ун пекех чунпа çирĕп те хастар пулма тăрăшаççĕ.

«Пирĕн ял тухтăрĕ»,– тесе ахальтен каламаççĕ пулĕ ял çыннисен ырлăхсывлăхĕшĕн тăрăшакан фельдшерица çинчен.

Галина Витальевна пуринпе те пĕр чĕлхе тупать. Ача амăшĕ пулма хатĕрленекенсемпе уйрăмах тимлĕ вăл. Анчах пепке сахал çурални шухăшлаттарать ăна. Кăçал ялта пĕр ача çут тĕнчене килнĕ, халь-халь тепĕр «çĕнĕ кайăк» хушăнмалла, вилекенсем вара нумайрах. Капла ялсем пушана, ватăлса ан юлтăрччĕ, тет.

Шкулта та кĕтеççĕ ФАП хуçине. Кунти 67 вĕренекенĕн сывлăхне пăхса тăрать. Тĕрлĕ чир-чĕр пирки сăмах хускатать. Акă, грипп чирĕнчен асăрханса ачасем пурте прививка тутарнă ( ялта пурăнакансем вара – 170-ĕн).

**–Эрех-сăрапа ытти сиенлĕ йăласене питлекен, спортпа туслă пулмалли çинчен лекцисем, çавра сĕтел хушшинчи калаçусем тăтăшах йĕркелет. Ĕç коллективĕсене те тухса çÿрет. «Симĕс çĕленпе» туслисене хытах лекет Галина Витальевнаран, –** тет В.Лаврова пенсионерка

–Хăвăр çак профессие суйласа илесси ăнсăртран мар тăр?– кăсăкланатăп калаçăва тăснă май.

–Паллах. Ялти фельдшер пунктĕнчи Наталия Павловна Полячихина чирлисене укол тунине, ÿт температурине виçнине, вăл çынсене пулăшнине сăнама юрататтăм. Кĕçĕн классенчех сывлăх сыхлавĕнче ĕçлес туйăм вăраннă.

Çак тĕллев Канашри медицина училищине илсе çитернĕ 8 класс пĕтернĕ хĕре. Ăнăçлă вĕренсе тухса алла специальноç илсен икĕ çул Сĕнтĕрвăрринче ĕçленĕ. Килĕштернĕ вырăс хĕрне кунта, унтах ĕçлеме хăварасшăн пулнă. Чунĕ тăван енех туртнă ăна. Ĕçĕ те тупăннă, ялти ФАПа вырнаçнă. Унтанпа 31 çул иртрĕ те, ак.

**–Пирĕн Галина Витальевна çепĕç сассипе, илемлĕ юррисемпе те çынсен кăмăл-туйăмне çĕклентерет, хавхалантарать. 8 çул вăл ансамбльте юрлать. Пĕр уяв та, пĕр мероприяти те унсăр иртмест. Çирĕм çул ялти суйлав комиссийĕн председателĕ пулнă. Ял пурнăçне илемлĕрех тума хăйĕн тÿпине хывать. Çуллен «Наци кросĕсемпе» «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» чупусене хутшăнать. Ăçтан ĕлкĕрет пур çĕре те тулккăш?–** тет культура çурчĕ çумĕнчи «Сударушки» ансамбльти Евгения Ситулина.

Акă, Аннесен кунĕнче те чăн-чăн праçник туса панă тĕрлĕ ÿсĕмри хĕрарăмсене. Чуна пырса тивекен юрă-кĕвĕпе куçĕсене шывлантарнă. Районти конкурссенче те, ытти праçниксенче те тухаççĕ сцена çине маттур юрăççем. Киччĕре ФАП уçнă чухне те пултарулăхĕпе илем кÿнĕ уява. Надежда Демина, Лариса Меркушина, Наталья Косова, Екатерина Жаркова, Антонина Лабзина, Галина Шакшина, Наталия Немова, Галина Полячихина юрăçсен ăсталăхне палăртса хăварчĕ медицина ĕçченĕ.

Ĕçри çитĕнÿсемшĕн, общество пурнăçĕнчи хастарлăхĕшĕн Галина Витальевнана ял пухăвĕнче район администрацийĕн Хисеп грамотине парса чысланă. Маларахри çулсенче районти больница администрацийĕн мухтав хучĕсемпе Чăваш Республикин сывлăх сыхлав министерствин Тавне парса хавхалантарнă.

Бадановсен çемйи ялта хисеплисенчен пĕри. «Çумра ăнланакан, яланах пулăшма хатĕр мăшăр пурри –чăн-чăн телей»,– пытармарĕ тинтерех 50 çулти юбилейне паллă тунă хĕрарăм. Александр Иванович хăй вăхăтĕнче Афганистанра интернационалла тивĕçе пурнăçланă, тĕрлĕ çĕрте тÿрĕ кăмăлпа тăрăшать. Екатерина хĕрĕ налук органĕн тытăмĕнче ĕçлет. Çемйипе Ижевск хулинче пурăнаççĕ. Çулталăкран иртнĕ Савелий мăнукĕ кукашшĕпе кукамăшне савăнтарать.

Р.ШУМОВА.



♦ Киччĕре ФАП уçнă вăхăтра